Инв. №

Уйăп Мишши

ТЕЛЕЙ ÇĂЛТĂРĔ

Инв. № 3046

3134

[illegible] [illegible]

[illegible], 13. VIII. 1965.

УЙĂП МИШШИ

6 августа 1941 г.
Подпись
№ 144.

ТЕЛЕЙ ÇĂЛТĂРĔ

СĂВĂСЕМ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ — ШУПАШКАР 1941

СЕНТЯБРЁН 17-МĚШĚ

Нумай эпĕр саванăç курнă,
Хаваслăн хумханнă нумай.
Телейлĕх тĕнчи пирĕн пурăнăç,
Кашни кунне йывăр манма.

Ăна кашнинех эпĕр кӳнĕ,
Ăна эрешленĕ ĕçпе.
Анчах çак сап-сарă кĕр кунĕ
Çиçет чăн çурхи хĕвелпе.

Ăçтан-ха хĕвел çутти çумĕ
Паян ман çĕршывăм çине?
Çĕршыв тăрăх саванăç хумĕ
Кĕрлет, çĕкдесе çынсене.

Çĕршыв тăрăх саванăç карĕ,
Сассем янăраç хĕрӳрех.
Паян ман çĕршыв Хĕрлĕ Çарĕ
Тăвансене ирĕк кӳрет.

Епле вăл пырать çĕнтерӳллĕ,
Çĕмрет кив тĕнче сăнчăрне,
Епле тав тăваççĕ хĕрӳллĕн
Ăна, ирĕк халăх çарне!

Тухаççӗ чупса мӗнпур халӑх,
Тухать çамрӑккийӗ, ватти.
— Тинех пансен йӑхӗ çухалӗ,
Таптаймӗ тек юнлӑ атти!

Нумай эпӗр тӳсрӗмӗр хурлӑх
Ылханлӑ пансен тӗрминче.
Пӑхаттӑмӑр тек чикӗ урлӑ,
Кураттӑмӑр урӑх тӗнче...

Унта ирӗк халӑх кун-çулӗ,
Телейлӗх тӗнчи ешӗрет.
Кунта—выçӑ пурнăç, куççулӗ...
Кӗтеттӗмӗр эпӗр сире.

Эсир ак телей илсе килтӗр.
Салам, тӑвансем, тавтапуç!
Антив, пирӗн савӑнăça илттӗр
Сире кунта янӑ çулпуç.

Тинех пӗтрӗ мӑшкӑллӑх, пусмӑр.
Çӗкленчӗ хӗвел тухăçран.
Тав сана, Сталин, аслӑ тусӑмăр,
Эс çӑлтӑн пире асапран...

Полксем вӗç-хӗррисӗр иртеççӗ,
Хӑватлӑн вӗçеç ялавсем.
Çынсем тавтуса хӗпӗртеççӗ,
Çӗкленнӗ саламлӑ алсем.

Çӗршыв тӑрӑх савӑнăç карӗ,
Сассем янăраç хӗрӳрех.
Паян ман çӗршыв Хӗрлӗ Çарӗ
Тӑвансене ирӗк кӳрет.

САВӐНӐҪ КУҪҪУЛӖ

Хӗрӗх ҫула ҫитичченех
Ҫӳҫсем ун кӑвакарнӑ.
Асап кун-ҫулӗ пит ҫине
Авмак йӗрсем хӑварнӑ.

Калать вӑл: «Мӗн пӗчӗккӗрен
Эп пусмӑрта асаплӑ ӳснӗ.
Чул евӗр хытнӑ ман чӗре,
Туртса ыратнӑ, писнӗ, тӳснӗ.

Курман эп ҫамрӑк кунсене,
Ылханлӑ пан ӗҫне ӗҫленӗ.
Вӑл ӗҫнӗ пирӗн юнсене
Тӑрана пӗлмен ҫӗленӗн.

Аннеҫӗм вилчӗ пан пусмӑрӗнче.
Пансем атте пуҫне те ҫирӗҫ.
Куҫҫуль тухман ман куҫсенчен:
Ҫӗкленнӗ ал пансене хирӗҫ.

Эп ларнӑ тӗттӗм тӗрмере,
Епле кӑна мӑшкӑл курман-ши?
Нихҫан куҫҫуль тухман пӗрре,
Йӗрес йӑла ют пулнӑ маншӑн.

Чӗремҫӗме чуллантарса,
Шӑла ҫыртса тӳссе тӑраттӑм.
Красноармееца курсан
Эп тӳсеймесӗр йӗрсе ятӑм...»

Львов хули,
1940 ҫ.

ÇĂЛĂНĂÇ

Умра выртать халне çухатнăн
Пансем хуçа пулнă çĕршыв.
Тин çеç-ха тупăсем ухлатнă
Кунта, иртмен-ха тар шăрши.

Тин çеç-ха сывлăшра кĕрленĕ
Самолетсем. Пĕр вĕçренех
Кунта вилĕм акса çӳренĕ
Хуласемпе ялсем çине.

Кил-çуртсем ишĕлнĕ, саланнă.
Алхаснă çулăм, вут çинче
Çынсем асаплăн ăшаланнă,
Хăруш сас тăнă пур енче.

Куçсенчен аннă терт куççулĕ,
Çынсем ниçта кайма пĕлмен.
Çăмăр пек çунă вилĕм—пуля,
Вăл никама та шеллемен.

Пăвнă çынна вилĕм ытамĕ.
Масар пулайнă ялсенчен.
Алхаснă вăрçă—юнлă тамăк,
Пĕтессĕн туйăннă тĕнче.

Çапах çынсем шăлсене çыртнă:
Пĕтмен-ха шанчăк чĕрере!
Чунсем тӳсме çук кӳтсе çитнĕ,
Анчах Мускав пур тĕнчере.

Пур ĕççыннин тăван çĕршывĕ.
Пур Сталин. Вăл курать, пĕлет.
Пурне те вăл атте пек çывăх,
Вăл пур çынна та хӳтĕлет.

Кам манĕ: пĕр сентябрь ирĕ
Епле телейлĕ пулнине,
Ял-хуласем, вăрман, уй-хирĕ
Çурхи шавпа тăп тулнине?

Вăл куна кам манма пултарĕ!
Епле хăватлăн кĕрлесе
Килчĕ ĕççынĕн Хĕрлĕ Çарĕ
Телейлĕх, ирĕклĕх курсе!

Урамсем тинĕс пек хумханчĕç:
Ку пулчĕ çăлăнăç çитни.
Юлашки хут куççем шывланчĕç.
Миçе çул-ши кăна кĕтни!

Пан йăхĕсем тарса çухалнă,
Вĕсем хăраççĕ курăнма.
Çынсем иккĕмĕш хут çуралнăн
Çĕнрен пуçларĕç пурăнма.

Янраса карĕ ирĕк юрă
Чун-чĕререн, кăкăр туллин:
Нихçан, нихçан та эпĕр урăх
Тек пулас çук пансен кулли!

ЫЛТТĂН АЛĂСЕМ

(ПĔР КАЛАÇУРАН)

Эп пĕлеп, эс мана ăнланатăн.
Хăв та эс ман пекех ĕççынни.
Эс, кăштах ĕненместĕн, туятăп,
Анчах эп калани—чăн-чăнни.

Эп столяр. Мĕнешкел эп ăстаçă!
Сан пĕлесчĕ ăна. Ман алсем
Тем те, тем те тума пултараççĕ,
Ĕç тесен—çаврăнуллă вĕсем.

Пилĕк çул эп çӳрерĕм пĕр ĕçсĕр.
Пилĕк çул. Вăл ытла та нумай.
Пансене эп ылхантăм пĕр вĕçсĕр,
Чăмăртарăм сулмак аллăма.

Пурнăçра тĕрĕсне эп шырарăм—
Тупаймарăм. Кунта вăл пулман.
Ененеймĕн юлташăм: ман арăм
Пилĕк çул ĕнтĕ ăшшăн кулман.

Кунта пулнă ултав, пусмăр, хурлăх,
Выçлăх, чухăнлăх... Куç уçтарман.
Эп ĕçленĕ пулсан—мĕнчул пурлăх,
Мĕн пуянлăх пултарнă тума!

Анчах ĕç тупăнман пирĕн тĕллĕн...
Пĕрисен—пурлăх выртнă çĕрсе,
Пирĕн пур—çăкăрсăр çăван-хĕлĕн
Ачасем выçă ларнă йĕрсе.

Тин ылханлă пансен шăпи тулчĕ,
Кĕтсе илтĕмĕр эпĕр сире.
Асапсем таврăнми иртсе юлчĕç,
Чи телейлĕ эпир тĕнчере.

Чĕререн ыр сунса саламлатпăр
Хамăр аслă тăван çĕршыва.
Унăн Хĕрлĕ Çарне тав тăватпăр,
Вăл пире хўтĕлен вăй-хăват.

Тав тăватпăр сана, аслă Сталин.
Пире патăн эс çак тивĕçе.
Килĕ кун: ырласа эс пахалăн
Ирĕк алăсем тунă ĕçе.

Çуртран тухмĕ иленнĕ телейĕм.
Еçлĕп эп савăнса, килленсе.
Калăн эс: ылттăн алăсем, тейĕн,
Ятăм пулĕ çĕршыв умĕнче.

Лиско хули.
1939 ç.

ЮРĂ

Эй, пуçлар-ха юрă,
Тытăнар мĕнпурĕ,
Сас ян кайтăр пур çĕре.
Савăк пултăр кăмăл,
Утма пултăр çăмăл,
Вутланса тăтăр чĕре.

Утăр хастаррăн,
Паттăр Хĕрлĕ Çарăн
Мухтавлă ывăлĕсем.
Юрлăр, чун киллентĕр,
Утăр, çĕр кисрентĕр,
Сехĕрленччĕр тăшмансем!

Ирĕклĕх çĕршывĕ
Пултăр сыхă, сывă!
Тăшман çĕклесен хĕçне—
Эпĕр ялан хатĕр!
Çĕмĕрсе аркатĕ
Хĕрлĕ Çар
Тăшман пуçне.

Утăр хастаррăн,
Паттăр Хĕрлĕ Çарăн
Мухтавлă ывăлĕсем.

Юрлăр, чун киллентĕр,
Утар, çĕр кисрентĕр,
Сехĕрленччĕр тăшмансем!

Тăван çĕршĕн эпĕр
Çапăçма пĕлетпĕр
Юнлă çапăçусенче.
Халăхсенĕн тавĕ,
Аттесен мухтавĕ
Пирĕн ялавсем çинче.

Утăр хастаррăн,
Паттăр Хĕрлĕ Çарăн
Мухтавлă ывăлĕсем.
Юрлăр, чун киллентĕр,
Утăр, çĕр кисрентĕр,
Сехĕрленччĕр тăшмансем!

Çулсем çĕнтерӳллĕ,
Чĕресем хĕрӳллĕ.
Савнă Сталин йыхăрсан:
Аслă совет çĕрĕн
Мĕнпур ывăл-хĕрĕ
Харăс тухĕ кар тăрса.

Утăр хастаррăн,
Паттăр Хĕрлĕ Çарăн
Мухтавлă ывăлĕсем.
Юрлăр, чун киллентĕр,
Утăр, çĕр кисрентĕр,
Сехĕрленччĕр тăшмансем!

Ӳсчӗр, чечекленччӗр,
Ҫӗнелсе ҫекленччӗр
Пур ялсем те хуласем.
Тинӗсре, ҫӗрте те,
Ҫӳлте—пӗлӗтре те
Сыхӑ пирӗн хуралсем.

Утӑр хастаррӑн,
Паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн
Мухтавлӑ ывӑлӗсем.
Юрлӑр, чун киллентӗр,
Утӑр, ҫӗр кисрентӗр,
Сехӗрленччӗр тӑшмансем!

ИКĔ ТУС

Вĕсем ачаран пĕр пек ĕмĕт тытса
Телейлĕ те çамрăк йышра
Пĕрле вĕренсе, ĕçлесе, юратса
Ӳсейнĕ тăван колхозра.

Ĕçре курăнман вĕсенчен чиперри,
Пулман хастарри вăйăра.
Каççем янкăс купăсне тăснă пĕри,
Тепри янăратнă юрра.

Çурхи ешĕл сад пек, çĕршыв ешĕрет.
Манми çак паха кунсенче
Тăван анне пек вăл пире ӳстерет
Телейлĕ хĕвел ăшшинче.—

Яш пулнă ик çамрăк, юн тапнă вĕри,
Яш чух юратмашкăн ансат.
Эп саврăм хĕре, тенĕ шăппăн пĕри,
Хăшлатнă тепри пăлханса.

Ик каччă ят илнĕ ял-йыш хушшинче,
Хастарлă вĕсем—ĕç тесен.
Анчах ытарма çук хĕрсен умĕнче
Çухалнă хăюллăх вĕсен.

Пӗрре, кӗр ҫитсен, тӑрса тухнӑ пӗр ир,
Ал тытнӑ вӗсем хумханса.
Хӗвелтухӑҫне ҫул тытайнӑ пӗри,
Ҫул тытнӑ тепри Анӑҫа.

Ҫӗршыв пире чӗнчӗ хисеплӗ ӗҫе,
Эпир унӑн ывӑлӗсем.
Пурне те пама хатӗр уншӑн, тесе
Телейлӗн юрланӑ вӗсем.

Ӑҫта ҫеҫ ҫитмест ман ҫӗршыв вӗҫ-хӗрри?
Пин-пин ҫухрӑма тӑсӑлать!
Ӑна Тухӑҫра хураллать пӗри,
Тепри Анӑҫра хураллать.

Тӑшман таврара юнаса куҫ хывать,
Ун юнлӑ алли кӗҫӗтет,
Вӑл пирӗн юратнӑ тӑван ҫӗршыва
Килсе тапӑнма кун кӗтет.

Хускалчӗ лере самурай—сӗмсӗрри,
Кунта пан хӑйрарӗ шӑлне.
Лешне Тухӑҫра ӑшаларӗ пӗри,
Ҫунтарчӗ тепри пансене.

Вӗсем Сталин ячӗпе кӗнӗ вӑрҫа,
Ҫӗнтерне ҫапӑҫура.
Паян вӗсемпе мухтанать Хӗрлӗ Ҫар,
Хыпаҫ юрӑсем халӑхра.

Мускав пирӗн аслӑ ҫӗршывӑн чӗри,
Пур паттӑрсене вӑл пӗлет!

Инçет Тухăçран килсе çитрĕ пĕри,
Тепри Анăçран ак çитет.

Савса саламлать вĕсене тĕп хула,
Савать халăх паттăрсене.
Ак Кремль. Ун çăлтăрĕсем çуталаç,
Унта аслă Сталин чĕнет...

Тăраç икĕ тус Кремльре. Çав тери
Телейлĕ. Çут орден умра.
Инçет Тухăçра паттăр пулнă пĕри,
Чап илнĕ тепри Анăçра.

1939 ç.

ХУРÇĂ ХĂВАТ

Тухăç вутлă-хĕмлĕ
Чаршавне сирет.
Сывлăм çутă кĕмĕлĕн
Акăннă çĕре.

Ирхи сывлăш ирĕкĕнче
Çил çаврать, итле!—
Пĕр вĕçтерчĕ, виркĕнчĕ
Самолет çӳле.

Пĕр вĕçтерчĕ, явăнчĕ
Ыр сунса пире.
Савнă хĕршĕн савăнчĕ
Ман вĕри чĕрем.

Ăсанаççĕ куçăмсем
Самолет çине.
Эп пăхатăп тусăмçăм
Епле вĕçнине.

...СКАЯ
...АЯ ПАЛАТА
В. Ч...

Вăл пырать-çке çămăллăн
Машинне тытса.
Хĕвел тухрĕ кăмăллăн,
Ăшшăн çутатса...

Çут ĕмĕтпе çитĕнчĕ
Тусăм çамрăкран.
Халь ак унăн питĕнче
Савăнăç куран.

Савăнăç та харсăрлăх
Пирĕн хĕрсенче,
Çирĕплĕх те паттăрлăх
Чун-чĕрисенче.

Çĕршыва савăç вĕсем,
Чиксĕр юратаç.
Ак паян тухаç вĕçсе
Чаплă парада.

Çĕршывăнне курăпăр
Хурçă хăватне.
Пĕлĕт çинче вулăпăр
Сталинăн ятне.

Килтĕр-ха, çыхлантăр
Сĕмсĕр самурай,—
Мăшкăллама памăпăр
Эпир хамăра!

Виркĕнĕç хăватлăн,
Тăвăла сирсе,
Çĕршывăн çунатлă
Ывăль-хĕрĕсем.

Тăшманран ним юлмĕ
Эпĕр тапрансан,
Пирĕн вăй вут-çулăмĕ
Тăкĕ аркатса.

1939 ç.

ЮРĂ ПУÇЛАМĂШĔ

Ăшă питпе те вутлă чĕлхепе
Эп юрлама санран ирĕк илетĕп.
Чĕрен пин-пин чĕвĕл чĕлĕхĕпе
Сан кăмăлна-çке юрă кĕвĕлетĕп.

Пĕр саншăн, чунăм, çунчĕ ман чĕре,
Санпа пĕрле эп пурнăçа юратрăм.
Санпа телейлĕ пултăм тĕнчере,
Эс ман сӳнми юратăва вăратрăн.

Вăратрăн эс ман çамрăк вăй-хала,
Ĕмĕтсене çунат парса çĕклерĕн.
Çамрăклăха, телейлĕ кун-çула
Ытарайми илемлĕ чечеклерĕн.

Çулăмланать чĕрем, юнăм вĕрет.
Вăл вĕри вут çăлкуçĕ пĕр санра çеç.
Кашни сăвăра, кашни кĕвĕрĕ
Нар пек чĕрӳн хĕлĕхĕсем янраççĕ.

Итле вĕсен асамлă сассине:
Унта чечен чĕрен чăн юратăвĕ.
Ан тиркесем хытах юррăмсене,
Мана çеç мар вĕсемшĕн, тен, тав тăвĕç.

ТЕЛЕЙ ÇĂЛТĂРĔ

Çăлтăр витĕр çул курăнать...

Чăваш юрри

Икĕ тус ирччен калаçнă
Лăпкă Атăл хĕрринче.
Пĕр чуптунă, сывпуллашнă
Уйăралса пĕр-пĕринчен.

„Кĕçĕрхи çĕр анваскаччĕ,
Вăл ан юлтăр манăçа,
Час курăймăн,—тенĕ каччă,—
Эп каятăп Анăçа.

Эп каятăп чыслăн, çирĕп
Сыхлама тăван çĕре.
Пур хăрушлăхсене сирĕп
Ун çинчен эп чикĕре.

Çарта паттăр йĕкет кирлĕ,
Эп шеллемĕп пуçăма:
Эп пултарăп вăйлă, вирлĕ
Хам çĕршывшăн çапăçма".

Ун чĕрийĕ çулăмланнă,
Ĕмĕт çиçнĕ шухăшра,
Вăл пĕр савăннă, хумханнă,
Хĕршĕн хуйхăрнă ăшра.

Вăл каланă: „Хура куçăм,
Мĕн пулсан та—аса ил...“
Мал енчен çĕкленнĕ шуçăм,
Вăшăлтатнă ăшă çил.

Вăшăлтатнă çил йăвашшăн,
Арпаштарнă хĕр çӳçне.
Çак ире манми тăвасшăн
Шуçăм çутăрах çиçнĕ.

„Эп шанатăп,—тенĕ хĕрĕ,—
Çирĕп пултăр ку сăмах,
Асра тытăп кунĕн-çĕрĕн
Чун юратнă тусăма.

Эп ĕçре те, вăйăра та
Чĕрере тытăп ятна.
Шăппăн тунсăхлăп, юратăп,
Вĕçес килĕ сан патна.

Çакăнта тухса эп юрлăп
Курас килнĕ вăхăтра.
Вĕççĕр хир-вăрмансем урлă,
Илтĕн эсĕ ман юрра.

Эп асран тухсассăн, чунăм,
Пăх эс кашни каçхине

Иксĕмĕр тĕл туса хунă
Тӳпери çăлтăр çине.
Пулĕ вăл телей çăлтăрĕ,
Янкăр тăрă kaçсенче
Çутăраххăн çиçсе тăрĕ
Вăл ытти çăлтăрсенчен.

Ун чухне мана асилĕн...
Пĕр сана çеç калама
Сан патна çак Атăл çилĕ
Кӳрĕ манăн салама".

Хĕр ик кусĕ пулнă шывлă,
Пĕрле хуйхăрнă тĕнче.
Кĕмĕлленнĕ çутă сывлăм
Ешĕл çулçăсем çинче.

Каччă пăхнă та йăл кулнă,—
Савнăç çиçнĕ питĕнче.
Ытарма çук хӳхĕм пулнă
Хĕрĕ унăн умĕнче.

„Авалтан йăли çаплаччĕ:
Пăхнă пĕлĕт çинелле,
Ырлăх кĕтнĕ,—тенĕ каччă,—
Халь каласçĕ çĕнĕлле.

Телее курмастпăр халĕ
Тӳпери çăлтăр çинче.
Пирĕн пурнăç ăраскалĕ
Çак çĕршыв тивлетĕнче.

Çак самант çитсессĕн эсе
Çӳлти çăлтăр çине мар,
Урăхне пăх, сарпикеçĕм,
Репродуктор умне лар.

Эс итле тăван çĕршывăн
Çĕнтерӳллĕ музыкне.
Пуринпе те пулăн сывăх
Пĕр чĕрееллĕ ун чухне.

Вăл самант туятпăр эпĕр
Кашнин ăшă сассине.
Вăл самант аса илетпĕр
Чи юратнă туссене.

Вăл самант мĕнпур ĕççыне
Шухăшлать Мускав çинчен.
Пур çĕрте те Сталин сăнĕ
Тăрать кашнин умĕнче.

Шухăшу унчух сан вĕçтĕр,
Çиттĕр аслă Мускава.
Умра Кремль çăлтăрĕ çиçтĕр
Илт эс площадьри шава.

Курантсем вуниккĕ çапĕç,
Янрĕ „Интернационал".
Ман çĕршыв хăвачĕ, чапĕ
Вăй кĕртет-çке пур çынна.

Санăн та юрлассу килĕ
Мускавпа пĕрле ун чух.

Çав самант мана асил эс,
Унтан чаплă самант çук.
Ун чух эп те сан пек ларăп,
Шухăшлăп Мускав çинчен.
Аслă юрату кăварĕ,
Çунĕ тусун чĕринче.

Ман умра та çиçсе тăрĕ
Ăшăтса, хĕлхемленсе
Пирĕн чăн телей çăлтăрĕ
Кремль башнисем çинчен.

Кĕрешме, çĕнмешкĕн чĕнĕ
Телей çăлтăрĕ пире.
Эпĕр тупнă пурнăç чăнĕ
Çутатать пĕтĕм çĕре.

Эпĕр куртăмăр ун витĕр
Хамăр пурăнăç çулне.
Пур çĕре çутти ун çиттĕр,
Çул кăтарттăр ĕççынне.

Унта пирĕн юрату та,
Чăн телей те ялтăрать.
Çавăнпа çапла вăл çутă,
Саламлаç вăл çăлтăра.

Ун ятне тупа тăвар-и,
Пурăнма, савма, çĕнме?
Ун ятне юрă хывар-и
Çĕршыв тăрăх илтĕнме?

Вӑл сана тек астутарӗ
Инҫетри тусу ҫинчен.
Ҫамрӑк юрату кӑварӗ
Пулӗ сан ҫырусенче.

Унпала нихҫан кулянмӑн,
Вӑл пур ҫӑлтӑртан паха,
Сывӑ пул, савниҫӗм, ан ман
Эп каланӑ сӑмаха...“

Пит аван-ҫке тӑван ҫӗрӗн
Хӗрӗ-ывӑлӗ пулма,
Пит аван-ҫке савнӑ хӗрӗн
Куҫӗнчен пӑхса тӑма.

Пит аван-ҫке ирхи кӳлӗм
Лӑпкӑ Атӑл хӗрринче
Ӗмӗтсем тумашкӑн ӳлӗм
Тӗл пулас кунсем ҫинчен...

Хӗр ик куҫӗ пулнӑ шывлӑ,
Пӗрле савӑннӑ тӗнче:
Кӗмӗлленнӗ ҫутӑ сывлӑм
Ҫурхи ҫулҫӑсем ҫинче..

1940 ҫ.

ЁНТЁ ВӐРМАН КАШЛАТЬ...

(ВӐРМАНТИ УЙӐРЛУ)

Ёнтё вӑрман кашлать, вӑрман кашлать,
Турат ҫумне турат хушас тет пуль.
Йӑпатать те йёкёт, хёрне ачашлать,
Хёрён ик куҫёнчен тумлать куҫҫуль.

Умра авкаланать ҫул, тӑсӑлать,
Йӑвӑҫсене сирсе ик еннелле.
Йёкёт кайма тухнӑ инҫе ҫула,
Инҫе ҫула, Хёвел Тухӑҫнелле.

Унта ҫёршыв чикки ӑна кётет,
Вӑл сыхлама каять тӑва́н ҫёрне.
Телейлё ҫул сунать хёр йёкёте,
Йёкёт сывлӑх сунать савнӑ хёрне.

Йёкёт сывлӑх сунать, телей сунать,
Хёре илме килетёп, тет, хёлле.
Хёр хумханать, хёрён чёри ҫунать,
Хёл кунёччен епле-ши кётмелле?

Поезд сасӑ парать ав, инҫетрен.
Лавӑҫи васкатать поезд тёлне.

Хӗр куҫӗнче ачаш куҫҫуль чӗтрет,
Савни ӑшшӑн шӑлать ун куҫҫульне.

Савни ӑшшӑн шӑлать те ачашлать:
— Эп манмӑп, эс те ан сивӗн, юрат...
Ӗнтӗ вӑрман кашлать, вӑрман кашлать,
Турат ҫумне хушас тет пуль турат...

Август, 1939 ҫ.

ÇЫРУ ВЫРĂННЕ

Эс ăсатнă чух каларăн:
Манмăп, терĕн, виличчен.
Пурçăн енчĕк халаларăн,
Кĕтĕп, терĕн, киличчен.

Ыталарăн та чуптурăн,
Эп каларăм тав туса:
„Сывă пул, телейлĕ пурăн,
Юрату пек пул таса“.

Юлашки хут эп пуç тайрăм
Савса пăхрăм сан çине.
Савăнса çеç тухса карăм,
Телей сунтăм туссене.

Халь тăратăп ак çĕршывăн
Хĕвеланăç чиккинче.
Шухăшлатăп: тусăм сывăх,
Анчах эсĕ пит инçе...

Унтанпа ĕнтĕ вăрахăн
Вăхăт шурĕ. Эп анчах,
Тен, çӳретĕп пуль хăраххăн
Сан сăмаххуна шанса.

Кам пӗлет, тен кашни каҫӑн
Санӑн кантӑку умне
Йӑпшӑнса ҫӳрет пуль каччӑ
Пусарма чӗри хумне?

Тен манса та карӑн пулӗ
Мана панӑ сӑмахна.
Юрату, тен, тӑрса юлӗ
Ӳлӗм асӑнма кӑна.

Тем пулсан та, пулнӑ айӑп:
Эпӗр савнӑ пӗр-пӗрне.
Ҫав телейлӗ вӑхӑта эп
Манма пӗлмӗп ӗмӗрне...

* *
*

Каллех сан хаклă çырăвна
Эп хама хам манса вулатăп.
Çырăвупа пĕрле хăвна
Хам куçăм умĕнче куратăп.

Çырăвупа пĕрле асра
Ытарайми кунсем иртеççĕ.
Манми кунсем ман пурнăçра
Ялан сана асилтереççĕ.

Кĕтнĕ çыру! Епле ăна
Эс ăшă алăпа йĕрленĕ.
Чĕрӳнти шухăш-кăмăлна
Ачашшăн хут çине тĕрленĕ.

Нимрен паха çырăвусем
Мана нумай-çке хумхантарнă.
Кашни килмессерен вĕсем
Юратупа ăша çунтарнă.

Ак халь те санăн çырăвна
Эп хумханса, çунса вулатăп.
Ачаш, чечен юратăвна
Кашни сăмахăнта туятăп.

Лиско хули, 1939 ç.

* * *

Аҫта пырсан та—эсӗ ман умра.
Пурте кунта сана асилтереҫҫӗ!
Пӗр эсӗ ҫеҫ-шим манӑн асӑмра,
Пӗр санпа ҫеҫ-шим тулнӑ ман чӗреҫӗм?

Вӑрман кашлать мӑнаҫлӑн таврара,
Ӗмӗртенхи юрри ҫапла шет унӑн.
Ак, пирӗн хурӑн чӳхенсе ларать,
Ун айӗнче эп пуҫласа чуптунӑ.

Ак, тӑсӑлса выртать пирӗн сукмак.
Ӑҫтан эс лӑпкӑн ун ҫине пӑхайӑн?
Аванччӗ иккӗн ун тӑрӑх утма
Уҫ сулхӑнра, яштак ҫӑкасем айӗн.

Ӗнтӗ ун чухнехи йӗрӗсене
Кӗркуннесем килсе ҫулҫӑпа витнӗ.
Кунта курап урӑх мӑшӑрсене,
Ӗнтӗ урӑххисем ҫитӗнсе ҫитнӗ.

Утаҫҫӗ майлӑн, шӑппӑн калаҫса.
Юратура иртет пурӑнӑҫ ирӗ.
Чӗлхисем ҫепӗҫ, сассисем таса,
Вӑрман тӑрӑх каять илемлӗ юрӑ...

Чӗнсе тӑратрӑм иртекен хӗре.
Ун аллинче тулли ҫырла чӗресӗ.
Вӑл та иккен сана асилтерет,
Ӑна курсан та асӑмра пӗр эсӗ!

1939 ҫ.

* * *

Иртейрĕ ăшă çу.
Йăвăççем ав, ир те каç
Сарă çулçине тăкаç:
Çитейрĕ кĕр.

Хыпар кĕтрĕм—çук.
Е пит инçе карăн-ши,
Е тусна манайрăн-ши,
Çунатлă хĕр?

Тухатăп урама.
Юрă пуçлатăп юсанса,
Хирĕç илтĕнмест сан сас,
Юхмасть çинçен.

Илтместĕн юррăма,
Ман умра çиçместĕн те,
Хăш енне тăрса чĕнес,
Хăш енчен?

Илем кӳреттĕнччĕ
Пур ĕçе тăрсассăн та,
Сан илемлĕ сассунта
Юрă ярăнатчĕ.

Ăçта çӳретĕн-ши
Ытарайми хĕрĕмçĕм,
Мĕнле яш-кĕрĕмсем
Халь саваççĕ?

КЁРХИ САД

„Ем-ешӗл тум тăхăнна сад"
Тесе эп савăсем ҫырсаччӗ.
Халь ҫулҫи пӗтнӗ тăкăнса,
Ҫаралнă тӗлпулусен сачӗ.

Аҫта сан шавлă халăху,
Аҫта ăш ҫу янраса юлчӗ?
Сад кашласа ларать салху,
Вӗҫсе ӳкет юлашки ҫулҫă.

Шапланнă шавлă кӗтессем,
Тенкеллисем пушаннă, тăлăх.
Тусăм тухман-ши-ха, тесе,
Тавраналла пăхатăп кăлăх.

Кунта эп шăпчăк сассине
Итле-итле юрра хураттăм
Савни чупса тухассине
Кӗпер ҫинче кӗтсе тăраттăм.

Аванччӗ кӗскетме ҫӗре.
Пире лăпкаччӗ ҫута шуҫăм.
Ăҫта эс халь, вӗри чӗре?
Ăҫта эс, чунăм, хура куҫăм?

* *
*

Снова ты?! Любимая, во сне ли...

В. Сосюра.

Ак, каллех тӗл пултӑмӑр, куратӑн,
Ӗлӗкхи пекех эпир пӗрле!
Ӗлӗкхи пекех эсӗ пытаратӑн
Куҫсене, вунҫич ҫулхи хӗрле.

Е хумханнине ан куртӑр, тетӗн,
Е ӗнтӗ ҫулсем иртейнӗ май
Кӑшт сивӗннишӗн именетӗн?
Ҫук, сивӗнмен. Пирте кӑвар нумай!

Шавласа ҫул хыҫҫӑн иртрӗ ҫулӗ...
Вӑхӑт витеймест юратӑва!
Ҫав-ҫавах чӗремӗрсем хӗрӳллӗ,
Юрату та ҫамрӑк ҫав-ҫавах.

Ҫулсерен илемлӗрех эс, чунӑм,
Ытарма ҫук сан чечен сӑнна.
Эх, пӗлесчӗ, мӗн тери эп ҫуннӑ
Самантлӑх ҫеҫ курас тесе сана!

Сана ҫеҫ эп пурнӑҫра юратнӑ,
Пӗр сана ҫеҫ эп савнӑ тӗнчере.
Эс пӗлесчӗ, мӗн тери ыратнӑ,
Тунсӑхланӑ саншӑн ман чӗре!

Çухалмарĕ çутă ĕмĕт-шанчăк,
Ак, каллех пĕрле вĕри чунсем.
Калама тăрсан чĕлхем çыхланчĕ,
Эсĕ те пулин сăмах чĕнсем!

1939—40 ç.ç.

АВГУСТ

Улмуççисене авать-çке
Садри хĕп-хĕрлĕ улма.
Каçхи кӳлĕм пит аван-çке
Кунта иккĕн тĕл пулма.

Пит аван-çке куçа-куçăн
Çулçăсенĕн хӳттинче
Калаçмашкăн шăппăн, уççăн
Çамрăк юрату çинчен.

Çил вĕрет те — улмуççийĕн
Тураттисене чӳхет.
Пиçсе çитнĕ панулмийĕ
Татăлать те пат! ӳкет.

Эс ăна парне пек шутлăн
Çак телейлĕ самантра.
Хĕнтĕр-хĕрлĕ улми тутлă,
Çурмалла çи — тутлăрах...

Кун-çулсем çапла каласчĕ:
Ик чĕре пĕр ĕмĕтпе
Çурмалла тума пĕлесчĕ
Телее те çакăн пек.

Пит аван-ҫке куҫа-куҫӑн
Ҫӑлтӑрсенӗн ҫуттинче
Каласмашкӑн шӑппӑн, уҫҫӑн
Ҫамрӑк ӗмӗтсем ҫинчен...

Лиско хули, 1940 ҫ.

ХӖР ШЫВА КӖРЕТ

Атӑл кӑккӑрӗ ҫинче
Шурӑ пӑрахут шӑвать.
Хӗр тӑрать шыв хӗрринче,
Ҫӑмӑл ҫеҫ тумне хывать.

Хывать ҫӑмӑл ҫеҫ тумне.
Пӑхать вӑрттӑн хӑй ҫине.
Именет вӑл илемне
Кӑтартмашкӑн ҫынсене.

Ӑна ҫилӗ ҫупӑрлать,
Атӑл астарать ӑна.
Лере каччӑ хураллать.
Именет хӗр, вӑтанать...

Лере каччӑ куҫ хывать...
Пулас марччӗ ун умне.
Хӗр сиксе чӑмать шыва,
Ӳкет Атӑл ытамне.

Атӑл ытамне ӳкет,
Атӑл ачашлать хӗре.
Хум ҫинче чӳхе-чӳхе
Сӑпкари пек сиктерет.

Хĕр тытасшăн хĕвеле,
Шевле хыççăн хăвалать.
Хум çинче вылять шевле,
Пĕр çиçет, пĕр çухалать.

Тыттарасшăн мар хĕре...
Юрĕ-çке, çиçсе çӳрех!
Юн вылять те юн хĕрет
Канлĕх илнĕ ӳт-пӳре...

Аллине çӳле сĕлтет,
Умне алшăлли витсе.
Лере, çыранра, çӳлте
Ун каччи тăрать кĕтсе.

Хĕр чĕнет Атăл хумне —
Вăл чӳхет урисене.
Атăл лăпкăн ун умне
Кустарать хумĕсене...

Юрласа хĕр тумланать
Атăл шывĕ хĕрринче.
Юрату çулăмланать
Чечек хĕрĕн чĕринче.

Июнь 1939 ç.

ЫЛТТĂН ЫВЛĂМ

Тимурпа Чĕкеçе.

Шăппăн, шăппăн килчĕ каçĕ,
Тĕттĕм ўкрĕ çĕр çине.
Ёнтĕ пурте çывăраççĕ,
Пурте хупнă куçсене.

Хура куçăм, пĕчĕк чунăм,
Çывăр, çывăр, куçна хуп.
Саншăн халь пурне те тунă,
Канлĕ пултăр ыйăху.

Тĕнчене ав, çутатасшăн,
Тулли уйăх хăпарать.
Çумăнти аннў ачашшăн
Сан çине пăхса ларать.

Вăл юрлать хулленĕн юрă:
«Ачаш ывлăм, куçна хуп.
Саншăн хатĕр халь мĕнпурĕ,
Канлĕ пултăр ыйăху.

Çывăрать хулийĕ, ялĕ,
Аçу санăн чикĕре.
Çĕршыва сыхлать вăл халĕ,
Хураллать иксĕмĕре.

Асилсе сунать пуль сывлăх
Хăй юратнă ывăлне.
Çывăр, çывăр, ылттăн ывлăм,
Сывлăх сунăпăр хăйне.

Çитĕнсен çулсем сан уçă
Пур çĕре те пур тĕле.
Мускавра — тăван çулпуçĕ,
Вăл сунать сана телей.

Ăна эпĕр саламлатпăр,
Вăл пурне ырлăх кӳрет.
Çывăр, çывăр, пĕчĕк паттăр,
Вăйла пулăн тĕнчере.

Ирĕк пурăнăç хĕвелĕ
Ăшшăн çутатать пире.
Эпĕр пултăмăр телейлĕ,
Эс ӳсен телейлĕрех.

Атăл евĕр тулăх, анлă
Пурнăç пирĕн çĕршывра.
Ыйăху халь пултăр канлĕ,
Пĕчĕк ывлăм, çывăрах.

Пирĕн пурăнăç иранĕ
Сан умра вăл уçăлать.
Ĕлĕкрен çынсем шыранă
Сан умра выртан çула.

Ӳсĕн ак, пурне ăнланăн
Ĕçпеле кĕрешӳре.

Халь ним шухăш та çук санăн,
Ăшшăн, канлĕн тĕлĕрех...»

Шăппăн, шăппăн килчĕ каçĕ,
Тĕттĕм ӳкрĕ çĕр çине,
Ĕнтĕ пурте çывăраççĕ,
Эс те хупрăн куçсене.

Çĕмĕрт куçăм, пĕчĕк чунăм,
Ăшшăн, ăшшăн çывăрах.
Саншăн халь пурне те тувă
Ытарма çук çĕршывра.

Лиско хули,
1940 çул.

ШУПАШКАР

> Атăлăн леш енче
> Шыв сасси, хум сасси.
> Атăлăн ку енче
> Чан сасси, пуп сасси.
>
> (*Ĕлĕкхи юрă*).

„Чабаксар, Чабаксар, —
Хуласен тĕп хули!
Пĕр пасар,
  ик тавар —
Мунчала та пушăт...“
Çаплаччĕ
  Улпут-хуçасенĕн кулли.
Килеттĕмĕр тулли,
  Тавăрнаттăмăр пушă.

Патша йыттисем кунта
  Вĕрнĕ тискер.
Ехрем хуçасем
  Ахăрашнă хулăнăн.
Шупашкар — чăвашсен
  Тĕп хули, тенĕскер —
Хуçасен,
  Пуп-манах таврашсен хули пулнă.

Чан сасси —
  Янраса минретнĕ пуҫа,
Пуп сасси —
  Пусмăрпа ултава пăхăнтарнă,
Шыв сасси —
  Куҫҫуллетнĕ трахомлă куҫа,
Хум сасси —
  Кăмăла тăвăлла хумхантарнă.
Иртсе юлчĕҫ
  Ылханлă кунсем ĕмĕре.
Паян аслă ҫĕршыв —
  Тулли пуранăҫ сачĕ.
Аслă Ленинпа Сталин
  Хĕвел пек пире
Ҫĕнĕ вăй, ҫĕнĕ ĕмĕт,
  Ҫĕн пуранăҫ пачĕҫ.

Шупашкар!
  Ирĕк халăхăн ирĕк хули!
Ҫурчĕсем епле ҫӳлĕ! —
  Патмаррăн ҫĕкленчĕҫ.
Хĕвĕшет халăх
  Аслă урамсем тулли,
Сачĕсем — пирĕн пуранăҫ пек
  Чечекленчĕҫ.

Чечекленчĕ ҫĕршыв,
  Чечекленчĕ хула.
Савăтсен трубисем
  Тĕтĕреҫҫĕ мăнаҫлăн.
Саламлать Шупашкар паян
  Тимĕр ҫула,

Таврана сас парать
  Хурçă учĕ хаваслăн.

Атăлтан саламлать ăна
  Шур пăрахут.
Аçталла каяс тен—
  Пур çĕре те çул уçă.

Унта—Атăл выртать
  Вĕç-хĕррисĕр, çапçут,
Кунта—çут тимĕр çул,
Чашлатать пăравусĕ.

Ирсерен самолетсем
  Вĕçеç пĕлĕтре.
Пирĕн çамрăклăх—
  Ирĕк, телейлĕ, çунатлă.
Кирлĕ чух эпĕр хатĕр
  Хăть хăш сехетре
Тăван çĕршĕн тăмашкăн
  Çĕнми вăй-хăватлăн.

Шупашкар!
Ман тăван сăвă-юрă сăпки!
Манми Çеçпĕл кунта
Сăвă юрă шăратнă,
Пирĕн çамрăк поэзин
  Чи çепĕç çеçки—
Сăвăçсем килессе кĕтсе
  Чунĕ ыратнă.

Килчĕç, килчĕç
  Эс кĕтнĕ чăваш ачисем!
Вут чĕлхеллĕ,
  Кăвар чунлă сăвăçсем килчĕç.
Халăхра янăраççĕ
  Вĕсен сăввисем,
Çĕршывра тивĕçпе янрама
  Хăват илчĕç.

Эп тухап ирхине
  Аслă Атăл хĕрне.
Чечекри Шупашкар хулине
  Саламлатăп.
Эп курап ирĕк халăхăн
  Ирĕк хирне.
Эп илтеп ирĕк халăхăн
  Ирĕк юррине,
Хам хĕвеллĕ çĕршыв çинчен
  Юрă юрлатăп.

УКÇА ТЫТАССИ
тата
ПЕРЕКЕТ КАССИ

Кам хăш еннелле,
Эп—перекет кассинелле.

В. Маяковский.

Пит ĕçчен çын пулнă ырă Укçине,
Колхозра вăл тупнă пурнăç уççине.
Ĕç тесен ĕçленĕ ыйăхне татса,
Ыйăхне татса та ĕçне юратса.

Савăнса ирттернĕ Укçине çăва,
Кĕр мăнтăрĕ килнĕ аслă çĕршыва,
Кĕр мăнтăрĕ килнĕ Укçине çуртне,
Укçине çуртне вăл кӳнĕ мĕнпурне.

Пур ĕçми-çими те çитнĕ ӳлĕмччен,
Парăмне те татнă çĕршыв умĕнче.
Панă çĕртен унăн палăрма пĕлмен,
Ун илнĕ çĕртен те нимĕн иксĕлмен.

Укçинен укçи те пулнă хăйне май.
Çирĕп алăраскер; пухăннă самай.

Перекетлӗ пулнӑ Укҫине инке.
Тыткалама пӗлнӗ вӑл укҫа-тенке.

Анчах ун пӗлниӗ кӑштах ҫитеймен:
Укҫине вӑл пухнӑ, усрама пӗлмен.
Арҫына парсассӑн—хӑйӗн ун расхут.
Хам алрах тытам-ха,—тенӗ,—пӗрреххут.

Амӗш парса янӑ сарӑ ҫӳпҫине
Вӑл пытарса хунӑ хӑйӗн укҫине.
Шанчӑклӑрах тӑтӑр вырӑнта, тесе,
Пир тӗрки ӑшне пытарнӑ чӗркесе.

Хӑй ҫапах шикленнӗ: е инкек килсен?
Кил-ҫурта сасартӑк вут хыпса илсен?
Укҫу-ҫӳпҫӳне те вара пӑх та кур!—
Нимсӗр тӑрса юлӑн, тем курасси пур.

Укҫана хӗвре усранӑ аптӑраса.
Е тухса ӳксессӗн? тенӗ хӑраса.
Вырӑн тупаймасӑр тухнӑ тинкерен.
Пӗлменни ҫав пулнӑ ырӑ инкере...

Пӑлтӑрта ун ларнӑ ҫутӑ сӑмавар,
Анчах ир те, каҫ та чей вӗретме мар,
Хӑнасем килсен ҫеҫ шӑп сӗтел варне
Кӑларса вӑл лартнӑ ҫут сӑмаварне.

Ахаль чух никам та тӗкӗнмен ӑна.
Укҫине хӑй тупнӑ вӑрттӑн вырӑна:
Ҫутӑ сӑмаварӑн хӑрӑм хӑвӑлне
Вӑл пытарса хунӑ хӗвӗнчи мулне.

Пĕрре, тем майпа-çке, пулайман килте.
Арçынни ĕçленĕ уншăн тĕпелте.
Ĕçрен таврăнсассăн ĕшенни çинчен
Чей ĕçем-ха, тенĕ, ăшĕ каниччен.

Çамки çинче унăн пăрçаланнă тар,
Умĕнче пăсланнă çутă сăмавар.
Чей ĕçсе вăл ларнă. Килнĕ Укçине.
Кăмăллăн, ачашшăн пăхнă ун çине.

Кĕç ак, асăрханă çут сăмавара:
Укçана асилнĕ, карнă çăвара.
Куçĕ курнине вăл хăй те ĕненмен,
Хыпăнса çеç ӳкнĕ, ним тума пĕлмен.

Трубара йăсланнă пĕчĕк вутпуççи,
Çунса кĕл пулайнă Укçине укçи...
Ăнран кайса йĕнĕ Укçине инке...
Пит те йывăр пулнă уншăн ку инкек.

Вăл хăйне ятланă: „Ах, айван ухмах,
Ма ăс çитеймен-ши кассăна хума?
Çавăн чул пăхса усранă укçана
Кассăна кайса хурас мĕн тахçанах...“

Çавăн чух ăс илнĕ Укçине инке,
Усрама пĕлет вăл халь укçа-тенке.
Укçа илсенех халь кассăна хывать,
Кассăна хывать те перекет тăвать.

Перекет тăвать те хăй ĕмĕтленет:
Ачасен те кĕрĕк пулĕ хĕллене.

Мĕн кирлĕ—пурне те туянăпăр, тет,
Укçа усрама çынна та вĕрентет:

— Укçана тирпейлĕ, тĕплĕ тытасси—
Чи шанчăклă вырăн—перекет касси.
Камăн ырана юлмалăх укçа пур—
Ăна перекет кассине кайса хур.

Кунсерен унта вăл хутшăнса тăрать.
Хутшăнса тăрать те процентне парать,
Укçуна унта тыт, ĕççынни, ялан,
Çĕршыва та усă, хăвшăн та аван!

Львов хули,
июль, 1940 ç.

ТУПМАЛЛИ:

Стр.

Сентябрĕн 17-мĕшĕ 3
Савăнăç куççулĕ 5
Çăлăнăç 7
Ылттăн алăсем 9
Юрă 11
Икĕ тус 14
Хурçă хăват 17
Юрă пуçламăшĕ 20
Тӧлей çăлтăрĕ 21
Ĕнтĕ вăрман кашлать 27
Çыру вырăнне 29
Каллех сан хаклă çырăвна 31
Ăçта пырсан та—эсĕ ман умра 32
Иртӧйрĕ ăшă çу 33
Кĕрхи сад 34
Ак, каллех тĕл пултăмăр, куратăн 35
Август 37
Хĕр шыва кĕрет 39
Ылттăн ывлăм 41
Шупашкар 44
Укçа тытасси 48

Редактор Стихван Шавлы.

НГ 2325. Подписано к печати 22/II—1941 г. Заказ № 92.
Объем 1,63, учет. авт. л. 2. Тираж 3000 экз.

Тип. № 1 Управл. изд. и полиграфии при СНК ЧАССР.
гор. Чебоксары, Дом печати.

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чебоксары Чувашской АССР

Цена 1 р. 50 коп.

УЙП МИШШИ

ЗВЕЗДА
СЧАСТЬЯ

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАСС Р
1941